27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ФЕВРАЛЬ
9
ЭРНЕКУН
25(6776) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Награда тата вăйлăрах ĕçлеме хушать

Паян «Чăваш Коммуни» хаçатра тырă хатĕрлемелли государство плавне ăнăçлăн пурнăçланăшăн Чăваш республикинчи партипе совет работникĕсене Отечественнăй вăрçă орденĕсемпе награднлласси çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕ кăлар, нă Указа пичетлетпĕр.

Тырă хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарнăшăн пирĕн республикăри партипе совет работникĕсене награднлани çинчен калакан хыпара колхозниксемпе колхозницăсем, орденлă Чăваш республикинчи мĕнпур ĕççыннисем савăнса кĕтсе илĕç. Вăрçă вăхăтĕнче тырă хатĕрлес ĕçе пирĕн партипе правительство фронтри ĕçпе танлаштараççĕ. Тырă пире тăшмана çĕнтермешкĕн хĕçнăшалпа боеприпас пекех кирлĕ.

Çакна палăртма питĕ кăмăллă: пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен пысăк отвеглăхне туйса тăрса, мĕн вăрçă пуçлан, нăрăппах государствăна тырă, аш-какай тата ытти апат-çимĕçсем памалли хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçласа пыçĕç. Пирĕн колхозсем государствăна тырă памалли плана çултан çулах срокчен тултарса пыçăç. Планран ирттерсе темиçешер çĕр пин пăт тырă парса пыçĕç. Çакна вĕсем ака мĕне пула туса пыма пултарчĕç: вăрçă вăхăтĕнче пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, çав тери пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, тырă тухăçлăхне тата тухăçлă вылăх-чĕрлĕх хисепне ӳстерсе пыçĕç.

Çав йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, пирĕн партипе совет организацийĕсем вăрçă вăхăтĕнче ялхуçалăхне ертсе пырас тĕлĕшпе пысăк опыт туянчĕç. Чылай районсен руководителĕсем, пуçламĕш парторганизацисем тата ял Советĕсем государствăн чи кирлĕ заданийĕсене вăхăтра пурнăçламашкăн колхозниксене мобилизацилеме вĕрентсе çитрĕç. Çак тĕлĕшпе Вăрнар районĕ лайăх пример кăтартса парать. Вăл 1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вăрçаленĕшĕн Государствăн Оборона Комитечĕн кусса çĕрекеп Хĕрлĕ Ялавне илчĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсенче вăрçăччен кая юлса пынă хăшпĕр районсем (сăмахран, Куславкка, Октябрьски тата ытти районсем те) хальхи вăхăтра ялхуçалăхне ăнăçлăн вăйлатса пыраççĕ. Партипе совет организацийĕсен çак çитĕнĕвĕсене правительство пысăка хурса хакларĕ, вĕсен руководителĕсене Совет Союзĕн фронтри ĕçсемшĕн награднлакан орденсемпе награднларĕ.

Пирĕн ялхуçалăхĕнчи ĕçсем ăнăçасси нумай енчен колхозсене ертсе пыма пĕлкинчен, колхозниксене вăрçă кăларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнтермешкĕн мобилизацилеме пĕлнинчен килет. Пирĕн пур районсем те хамăран мĕнпур ресурссемпе майсене пĕтĕмпех мобилизацилеме пултарнă пулсан, пирĕн республика вăйлă тырпул туса илес ӳçре тата общественнăлла вылăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тата пысăкрах çитĕнӳсем тунă пулĕччĕç. Кувакино, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай районĕсен тата хăшпĕр ытти районсен руководителĕсем чылай колхозсем кая юлса пынине пĕтереймен, вăйлă тырпул туса илмелли майсемпе пуринпе те усă курман. Малта пыракан районсен руководителĕсене награднлани — ытти районсене малалла туртăнма хистет. Йывăрлăхсене çĕнтерме, колхозсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене пĕтерме пирĕн условисем пур. Фактсем çавна лайăх кăтартса параççĕ. 1943 çулта питĕ кая юлса пынă Пăрачкав районĕнчи нумай колхозсем иртнĕ çулта ялхуçалăх ĕçĕсене нумай лайăхрах туса иртнĕçĕç. Шăмăршă районĕнчи ĕлĕкрех кая юлса пынă чылай колхозсем те пĕлтерт ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса иртнĕçĕç, государствăна тырă вăхăтра парса татнĕç.

Малта пыракан колхозсемпе районсен çитĕнĕвĕсемпе эпир тивĕçлипе савăнса мухтанатпăр. Паян, эпир пирĕн республикăри 51 работника пысăк награда панипе савăнса мухтанатпăр. Анчах пирĕн тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар. Пире Сталин юлташ çавĕн пек вĕрентет. Тӳрех калас пулать, ялхуçалăх ĕçĕнче пирĕн çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Пирĕн колхозсенчи общественнăлла вылăх-чĕрлĕх йышĕ çителĕклĕ ӳссе пымасть. Малта пыракан нумай районсем те хăшпĕр чухне государствăна вылăх-чĕрлĕх продукцийĕпе техникăллă культурăсем вăхăтра парса татмаççĕ. Пирĕн вырăнти парти, совет тата хатĕрлев организацийĕсем колхозниксемпе пĕччен куçалăхлă хресченсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татманнине, вĕсен çав парăмĕсене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕслемеççĕ.

Ялхуçалăх çулталăкĕн чи ответлă талхăрĕ çитесси—çуракине тухасси—инçе юлмарĕ ĕнтĕ. Çуракине пирĕн пур енчен те лайăх хатĕрленсе çитсе тухмалла. Кăçал пирĕн пĕлтĕрхинчен вăйлăрах тырпул туса илмелле, кирек мĕнле условисем пулсан, та пирĕн республикăри мĕнпур колхозсен тырпул тухăçлăхне ӳстермелли плана пурнăçа кĕртмелле.

Кăçал пирĕн республика 25 çул тултарать. Çав чаплă куна пирĕн çуракине кăтартулăн иртнинпе, акнă тырра пăхас ĕçе большевикла организациленипе, общественнăлла вылăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес ĕçре чылай пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илмелле.

Кăçал мĕн чухлĕ тырпул туса илессине хальхи вăхăтри, çуракине хатĕрленнĕ тăнăхăрти ĕçсем татса параççĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсаса хурасси, лайăх вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе хурасси, ĕç выльăхне ĕçе тухма хатĕрлесе çитересси, вырăнти удобренисем хатĕрлесе хурса кирĕ турттарса кăларасси—çуракине хатĕрленес ĕçре питĕ кирлĕ мероприятисем пулса тăраççĕ, вырăнти парти, совет тата çĕрĕç органĕсен çав ĕçсем çине питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Парти, совет тата çĕрĕç органĕсен тракторсене, вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене тата лаша инвентарьне юсас ĕç çине питĕ хытă çавăрăнса пăхмалла. Элĕк, Октябрьски, Етĕрне, Пăрачкав, Ишлей, Советски районсенче лаша вăйĕпе ĕçлекен ялхуçалăх машинисене юсас ĕç питĕ начар пырать-ха.

Çуракине пур енчен те лайăх хатĕрленес ĕçре кашни кунпа туллин усă курмалла. Колхозниксемпе колхозницăсен хальхи вăхăтра вăрлăх сортлас, удобрени турттарса кăларас, ялхуçалăх машинисем юсас, юр пытса хăварас ĕçсене çуракине уборка наханĕнчи пекех çине тăрса туса пымалла.

Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăхĕнчи специалистсем, Хĕрлĕ Çаран чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хаваласа, кăçал тырă, çĕрулми, пахча-çимĕç тата техникăллă культурăсем тата ытларах туса илме пĕтĕм вăйпа тăрăшăç. Çак задачăна пурнăçлас шутпа колхозсенче халь социализмлă ăмăрту тепĕр хут сарăлса, вăйланса пырать. Парти совет тата комсомол организацийĕсен çав ăмăртăва ертсе пымалла. колхозниксене çуракине кăтартулăн хатĕрленме, ăна ăнăçлăн иртерме мобилизацилемелле.

Союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин—руководителĕсен конференцийĕ

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ, Совет Союзĕн Премьерĕ тата Великобритани Премьер-Министрĕ хăйсен штабĕсен начальникĕсемпе пĕрле, çавăн пекех тата Ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕпе тата ытти советникĕсемпе пĕрле хальхи вăхăтра Хура тинĕс районĕнче канашлаççĕ.

Вĕсен тĕллевĕ—пĕрлехи тăшмана аркатса тăкас ĕçе вĕçлемелли плансене пĕр-пĕринпе килĕштересси тата хăйсен союзникĕсемпе пĕрле нумай вăхăтлăха пымалли мирĕн çирĕп никĕсĕсене хывасси пулса тăрать.

Вĕсем пĕр чарăнмасăр канашлаççĕ.

Конференцире чи малтан вăрçă ĕçĕсене сӳтсе-явнă. Европăри мĕнпур фронтсенчи хальхи лару-тăрăва пăхса тухнă, пĕр-пĕрне пытĕ тулли информаци панă. Нацистсен Германине хирĕç пыракан вăрçăн юлашки тапхăрĕнче пĕрле туса иртермелли вăрçă ĕçĕсем пирки пĕтĕмĕшпех калаçса татăлнă. Виçĕ правительствăн çар штабĕсем хальхи вăхăтра пĕрле тĕплĕ плансем тăваççĕ.

Халĕ çаван пекех тата çирĕп мир тăвас ыйтусем пирки калаçма тытăннă. Çак калаçусем Германие оккупацилесе тата контроллесе тăмалли пĕрлехи плансене, ирĕке кăларнă Европăн политикăпа экономика ыйтăвĕсене, çаван пекех тата мирлĕ пурнăçа сыхласа тăмалли пĕтĕм тĕнчери яланлăх организацине хăвăртрах тума сĕннине тивеççĕ.

Конференци пĕтнĕ хыççăн ун çинчен уйрăм пĕлтерӳ пулать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем **ХĔВЕЛТУХАÇ ПРУССИРЕ, АЛЛЕНШТАЙН** хулинчен сӳрçĕртерехре, малалла тапăнса пынă, **ВОССЕДЕН, ЛАНГВИЗЕ, ЛАУНАУ, ФРАЙМАРКТ, БЕНЕРН, АРНСДОРФ** ялĕсене туртса илнĕ.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, **БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ)** хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре **ОДЕР** шывĕ урлă каçнă та нимĕçсен çав шывăн хĕвеланăç хĕрринчи нумай вăхăтлăха тунă тата вăйлă тĕреклетнĕ оборонине татса кĕнĕ, виçĕ кун хушши малалла тапăнса пырса, 20 километр таран шалалла кĕнĕ, тытса илнĕ плацдарма 80 километр таран сарнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем **ОЛАУ, БРИГ, ТОМАСКИРХ, ГРОТТКАУ, ЛЕВЕН** тата **ШУРГАСТ** хулисене—çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен **ОДЕР** шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, çаван пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем хулан хĕвеланăç пайĕнче **(БУДАРА)** хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, 12 квартал тытса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтра пирĕн çарсем нимĕçсен 433-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне **ЛЮББЕ** генерал-лейтенанта тыткăна илнĕ.

Февралĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 189 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 21 самолетне персе ӳкернĕ.

ФЕВРАЛĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем **КЕНИГСБЕРГ** хулинчен кăнтăртарахра малалла тапăнса пынă, 30 ял ытла тытса илнĕ, вăл шутра **ЛИПНИКЕН, ЗОЛЛАУ, ПОСМАЛЕН, ЛАЙДТКАЙМ, ЛАМПАШ, ПОШЛОШЕН** ятлă пысăк ялсем. Февралĕн 5-мĕшĕпе 6-мĕшĕнче **КЕНИГСБЕРГ** районĕнче пирĕн çарсем 2.260 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

ОДЕР шывĕ çинчи **КЮСТРИН** хулинчен сӳрçĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем **ОДЕР** шывĕн хĕвелтухăç хĕррине тăшмантан тасатасшăн çапăçнă, **ЦЭКЕРИК, АЛЬТ ЛИТЦЕГЕРИКЕ, ГЮСТЕБИЗЕ, ХЭЛЬЗЕ, КЛЕВИТЦ, АЛЬТ ДРЕВИТЦ, ТРЕТТИН, КУНЕРСДОРФ, АУРИТЦ** ялĕсене туртса илнĕ. Ку районра февралĕн 5-мĕшĕпе 6-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем 4.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата аэродромсенче тăшманăн 69 самолетне тытса илнĕ.

БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем **ОДЕР** шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, 50 ял ытла тытса илнĕ, вăл шутра—**МЭРЦДОРФ, ВЮРБЕН, ГРОССБУРГ, ЛИХТЕНБЕРГ, ДОЙЧЕ-ЛАЙППЕ, МИХЕЛАУ, БОРКЕНХАЙН, ВОЛЬФСГРУНД, ЭЙЗЕНАУ, ПРЕЙСДОРФ** ятлă пысăк ялсем. Ку районра февралĕн 5-мĕшĕпе 6-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем 4.200 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата аэродромсенче тăшманăн 28 самолетне тытса илнĕ.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, 10 квартал туртса илнĕ. Хулан хĕвеланăç пайĕнче **(БУДАРА)** февралĕн 5-мĕшĕпе 6-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем тăшманăн 5.600 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Февралĕн 6-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 140 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 26 самолетне персе ӳкернĕ.

Кăçалхи январĕн 12-мĕшĕпе февралĕн 4-мĕшĕ хушшинче, малалла наступлени туса пырса, фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çак командирĕсене **ТЫТКАНА ИЛНĔ:** нимĕçсен 88-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне **РИТБЕРГ** генерал-лейтенанта, нимĕçсен 304-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне **ЛИСС** генерал-майора, нимĕçсен 433-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне **ЛЮББЕ** генерал-лейтенанта, нимĕçсен 17-мĕш танковăй дивизийĕн командирне **БРУКС** полковника, нимĕçсен 10-мĕш моторизованнăй дивизийĕн командирне **ВИАЛЬ** полковника, нимĕçсен 42-мĕш армейски корпус штабĕн начальникне **ДРАБИХ-ВЕХТЕР** полковника, нимĕçсен 42-мĕш армейски корпусĕн артиллерийĕн командующине **РОЗЕН** полковника, авиаци министерствин отдел начальникне авиаци генералне **МАНКЕНЕ**, 39-мĕш ĕç çар округĕн начальникне **ВЕССЕМАН** генерала.

Вĕлернĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен ӳчĕсем хушшинче çак командирсен вилнисене тупнă: нимĕçсен 42-мĕш армейски корпусĕн командирĕн — пехота генералĕн **РЕКНАГЕЛĔН**, нимĕçсен 56-мĕш танковăй корпусĕн командирĕн—пехота генералĕн **БЛОКАН**, нимĕçсен 69-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн **РАЙН** генерал-лейтенантăн, нимĕçсен 72-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн **ХОН** генерал-майорăн, нимĕçсен 78-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн **ГИРШФЕЛЬД** генерал-майорăн, нимĕçсен 214-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн **КИРБАХ** генерал-лейтенантăн, нимĕçсен 291-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн **ФИНГЕР** генерал-майорăн, нимĕçсен 342-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн **НИККЕЛЬ** генерал-лейтенантăн ӳчĕсене тупнă.

☆ ☆ ☆

Хĕвелтухăç Пруссире, Кенигсберг хулинчен кăнтăртарахра, пирĕн çарсем çаплах наступлени туса, пынă, тăшманăн Поснер шывĕ хĕрринчи нумай вăхăтлăха тунă тата вăйлă çирĕплетнĕ оборони патне пырса тухнă. Хаярăн çапăçнă хыççăн совет часĕсем Поснер шывĕ урлă каçнă та унăн сулахай хĕррине тĕреклетнĕ Посмален ятлă пункта туртса илнĕ, 24 пысăк дот тытса илнĕ. Нимĕçсене çаван пекех тата Крайсиш-Алау хулинчен 4 километр сӳрçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Ламлаш ялĕнчен хăваласа кăларнă.

Кун каçиччен 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, тăшманăн 28 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кюстрин хулинчен сӳрçĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Тăшман Одер шывĕн хĕвелтухăçĕнчи плацдармне кирек мĕн шулсан та хăйĕн аллинче тытса тăма тăрăшать. Нумай вăхăтлăха тунă укрепленисемпе усă курса, гитлеровецсем хаярăн хирĕç тараççĕ, йышлă контратакăсем тăваççĕ. Совет часĕсем, вирлĕн пырса çапса, Кюстрин хулин сӳрçĕр хĕррипе юнашар ларакан Альт Древитц ятлă пункта тытса илнĕ. Пирĕн çарсем Одер çинчи Франкфурт хулине пырса кĕмеллин вырăнсене хӳтĕлекен тăшман группировкине йывăр поражени кӳнĕ. Франкфуртран 5 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Кунерсдорф ялне туртса илнĕ. Кун каçиччен тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, 5.000 салтака та офицер таран пĕтнĕ. Нимĕçсен 65 танка тата 90 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Пирĕн çарсем туртса илнĕ Кунерсдорф ятлă нимĕç ялĕ—вырăссен вăрçă историйĕнче палăлă ял. Çичĕ çул хушши пынă вăрçă вăхăтĕнче, 1759 çулхи августăн 14-мĕшĕнче, çав Кунерсдорф ялĕ патĕнче Салтыков генерал командир пулса ертсе пыракан вырăс çарĕсемпе пруссаксен II-мĕш Фридрих королĕн çарĕсем хушшинче пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Вырăс çарĕсем нимĕçсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă, вара лешсем тарнă.

* * *

Бреслау (Бреславль) хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, Одер шывĕн хĕвеланăç хĕррипчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Совет пехотинецĕсем, танкистсемпе артиллеристсем пулăшнипе, нимĕçсене Штрелен хулинчен 9 километр сӳрçĕртерехре ларакан Гроссбург ялĕнчен хăваласа кăларнă. Одер шывĕн сулахай хĕррипе наступлени туса пыракан пирĕн ытти чассем 10 километр малалла кайнă та нимĕçсен оборонин тĕреклĕ пулса тăракан Прейсдорф ялне туртса илнĕ.

Енер туртса илнĕ Бриг хулинче пирĕн çарсем трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра — 19 танк, 62 хир туппи, 1.000 автомашина тата çар пурлăхĕн склачĕсем нумай.

* * *

Будапештра пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Шăхедь тăвĕшĕн вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Çав ту нимĕçсен аллинче тăрса юлнă хула пайне хӳтĕлеме питĕ меллĕ пулнă. Тăшман Шашхедь тăвĕнчен оборонăн хăватлă узелĕ туса хунă. Çавăнти укрепленисемпе усă курса, гитлеровецсем хаярăн хирĕç тăраççĕ, йышлă контратакăсем тăваççĕ. Совет часĕсем, вирлĕн пырса çапса, Кюстрин хулин сӳрçĕр хĕррипе юнашар ларакан Альт Древитц ятлă пункта тытса илнĕ. Пирĕн çарсем Одер çинчи Франкфурт хулине пырса кĕмеллин вырăнсене хӳтĕлекен тăшман группировкине йывăр поражени кӳнĕ, Франкфуртран 5 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Кунерсдорф ялне туртса илнĕ. Кун каçиччен тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, 5.000 салтака та офицер таран пĕтнĕ. Нимĕçсен 65 танка тата 90 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Пирĕн çарсем туртса илнĕ Кунерсдорф ялĕ—вырăссен вăрçă историйĕнче палăлă ял. Çичĕ çул хушши пынă вăрçă вăхăтĕнче, 1759 çулхи августăн 14-мĕшĕнче, çав Кунерсдорф ялĕ патĕнче Салтыков генерал командир пулса ертсе пыракан вырăс çарĕсемпе пруссаксен II-мĕш Фридрих королĕн çарĕсем хушшинче пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Вырăс çарĕсем нимĕçсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă, вара лешсем тарнă.

* * *

Бреслау (Бреславль) хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, Одер шывĕн хĕвеланăç хĕррипчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Совет пехотинецĕсем, танкистсемпе артиллеристсем пулăшнипе, нимĕçсене Штрелен хулинчен 9 километр сӳрçĕртерехре ларакан Гроссбург ялĕнчен хăваласа кăларнă. Одер шывĕн сулахай хĕррипе наступлени туса пыракан пирĕн ытти чассем 10 километр малалла кайнă та нимĕçсен оборонин тĕреклĕ пулса тăракан Прейсдорф ялне туртса илнĕ.

Енер туртса илнĕ Бриг хулинче пирĕн çарсем трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра — 19 танк, 62 хир туппи, 1.000 автомашина тата çар пурлăхĕн склачĕсем нумай.

* * *

Будапештра пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Шăхедь тăвĕшĕн вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Çав ту нимĕçсен аллинче тăрса юлнă хула пайне хӳтĕлеме питĕ меллĕ пулнă. Тăшман Шашхедь тăвĕнчен оборонăн хăватлă узелĕ туса хунă. Çавăнти укрепленисемпе усă курса, гитлеровецсем хаярăн хирĕç тăраççĕ, йышлă контратакăсем тăваççĕ. Совет часĕсем, вирлĕн пырса çапса, Кюстрин хулин сӳрçĕр хĕррипе юнашар ларакан Альт Древитц ятлă пункта тытса илнĕ. Пирĕн çарсем Одер çинчи Франкфурт хулине пырса кĕмеллин вырăнсене хӳтĕлекен тăшман группировкине йывăр поражени кӳнĕ.

Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăха организованнă ирттерер

А. МАТВЕЕВ

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

Октябрьти Социализмлă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн историллĕ докладĕнче пирĕн çулпуç Сталин юлташ Хĕрлĕ Çарăн, пирĕн государствăн тата халăхăн паттăр кĕрешĕвĕн итогĕсене туса пачĕ. Сталин юлташ совет халăхĕ Отечественнăй вăрçăра тунă паттăр ĕçсене пысăка хурса хакларĕ.

Совет тылĕн патриочĕсем—рабочисемпе колхозниксем тата интеллигентсем,—вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, совет тылне йĕркеллĕн ĕçлеттерме пултарчĕç.

Сталин юлташăн докладĕ çине ответлесе, паттăр Хĕрлĕ Çар Отечественнăй вăр. çăн пур фронтĕсенче 1- вăйлă наступлени туса пынипе хавхаланса, республикăри вăрман хатĕрлекен чылай предприятисен рабочийĕсемпе инженерла-техникла работникĕсем спецсортиментсем хатĕрлемелли плана февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма тата планран ирттерсе 25 процент чухлĕ продукци пама, чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле пурнăçлама тата планран ирттерсе 2.000 кубометр вутă пама пулчĕç. Улатăр вăрман хуçалăхĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана январĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарнă, халь вăл планран ирттерсе вутă хатĕрлет. Улатăр вăрманпромхозĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра авиаци валли хыр хатĕрлемелли плана январĕн 28-мĕшĕ тĕлне 101 процент тултарнă, вăл та халĕ планран ирттерсе хатĕрлет. Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ те лайăх ĕçлет, вăл кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма пултчĕ.

Куславкка районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана пур енĕпе те февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнăскерсем, вăрманта малашне те ĕçлеме тата çĕршыва планран ирттерсе вутă хатĕрлесе пама йыцăннă. Çакăн пек примерсем республикăра сахал мар.

1944 çулхи IV-мĕш кварталта нумай районсемпе вăрман хатĕрлекен предприятисем, лайăх ĕçлесе, плана пĕтĕмпех тултарчĕç пулсан, хальхи вăхăтра вара çакна калама çук-ха. Январь уйăхĕнче чылай районсемпе вăрман хатĕрлекен организацисем хăйсен ĕçне сӳрĕклетрĕç. Сăмахран, Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ, 1944 çулхи IV-мĕш кварталта лайăх ĕçлесе, ВЦСПС-па СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главлесоохранăн кӳçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата пĕрремĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Январь уйăхĕнче вара çак вăрман хуçалăхĕ хăйĕн ĕçĕн хăвăртлăхĕсене тӳсме çук чакарчĕ. Ку вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекен Советски тата Муркаш районĕсен руководителĕсем те хăйсен ĕçне вăйсăрлатрĕç, çавна пула çак районсем январь уйăхĕнчи плана 50—60 процент кăна тултарчĕç.

Вăрман хатĕрлекен ытти хăшпĕр предприятисемпе районсем те çителĕксĕр ĕçленине палăртмалла. Чăваш республикинчи Наркомлесăн мĕнпур предприятийĕсенчен январь уйăхĕнчи плана вутă турттарас тĕлĕшпе Алтышевăри вăрманпромхозпа Долгополянăри вăрман завочĕ кăна тултарчĕç. Канаш, Йĕпреç, Атăл тăрăхĕнчи вăрман. промхозсем, Хĕрлĕ Чутай тата Çĕмĕрле мехлесопункчĕсем калама çук çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Иртнĕ çулхи IV-мĕш кварталти пекех, Етĕрне, Çĕрпӳ, Кувакино, Тăвай, Элĕк, Красноармейски тата Сĕнтĕр районĕсем халĕ те начар ĕçлеççĕ. Совнарком асăрхатарăмпа пулин те, вăрман хатĕрлес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе вĕсем халлĕхе нименех те тумаççĕ.

Вăрман хатĕрлекен чылай предприятисемпе районсем çителĕксĕр ĕçлени çакăнтан килет: вăрманта ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхĕ начар, чылай предприятисенче ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ çителĕксĕр тата пурриссем те час-часах улшăнса тăраççĕ.

Районсемпе вăрман хатĕрлекен предприятисен руководителĕсем нумайĕшĕ вăрманта ĕçлеме мобилизацилеменĕ колхозниксене ĕçе вăхăтра кăларассишĕн тата вĕсене çав ĕçре çирĕплетсе хăварассишĕн тăрăшмаççĕ. Вăрманта ĕçлеме мобилизацилеменĕ колхозниксем чылайĕшĕ, вăрмана кайса хăйсене панă задание пурнăçа кĕртес вырăнне, хăшпĕр колхозсен тата ялсовет исполкомĕсен председателĕсем хӳтĕлеппине, халĕ те колхозсенчех ĕçлеççĕ. Вĕсем вырăнне вăрмана урăх çынсене яраççĕ, анчах вĕсем те икĕ-виçĕ кунтанах каялла танăрăнаççĕ. Çакă вара ĕç вăйĕ пĕрмаях улшăнса тăрасси патне илсе пырать. Сăмахран илсен, Элĕк районĕ иртнĕ çулти IV-мĕш кварталта вăрман хатĕрлемелли плана тултараймарĕ, кăçалхи 1-мĕш кварталта та питĕ çителĕксĕр ĕçлет. Çак районри ертсе пыракан юлташсем план тулманнине вăрман участокĕ начарринпе ăнланатарса пама пăхаççĕ. Çав вăхăтрах IV-мĕш кварталта вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ ямалли планă Элĕк районĕ çуран çынсем тĕлĕшпе 98 процент, лашасем тĕлĕшпе 35 процент кăна тултарнă. Çавăнпа та район вăрман хатĕрлемелли плана 53 процент, турттармалли плана 72 процент кăна тултарчĕ. Çак районран вăрмана пынă 224 çынтан мобилизацилеменисем 45 çын кăна пулнă, ытти сем вара пулăшас майпа янă скерсем пулнă.

Çак районри «Тенеево» колхоз колхозникĕсем Вера Никитина, Дмитрий Романов, Петр Тимофеев, вăрманта ĕçлеме мобилизацилеменĕскерсем, колхоз председателĕ Семенов юлташ хӳтĕлеппине, халĕ те колхозрах пурăнаççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти районсемпе колхозсенче те пур. Рай. совет исполкомĕсен председателĕсем çакăн пек фактсем çинчен пĕлеççĕ, анчах ку тĕлĕшпе çирĕп йĕрке тăвассишĕн кĕрешмеççĕ.

Районсен, ялсоветсен тата колхозсен чылай руководителĕсем вăрман хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарнă хыççăн лăпланса ларчĕç, вăрман хатĕрлекен предприятисен хăшпĕр руководителĕсем варăкăштах канма шутларĕç пулас. Çакна пула январь уйăхĕнче вăрманти ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕн хисепĕ нумай чакрĕ. Ĕç вăйĕ планпа пăхнинчен сахалтарах пулнă пулин те, вăрман хатĕрлекен предприятисен директорĕсем районсене хăйсен представителĕсене ямаççĕ, хăйсен кабинечĕсенче ĕç вăйĕ килессе кĕтсе лараççĕ. Вăрнар вăрманпромхозĕн директорĕ Непримеров юлташ Красноармейски районра 5 уйăх хушшинче пĕр хут та пулман. Çĕмĕрле мехлесопункчĕн начальникĕ Клячкин юлташ районсене тухса сӳрессине вуçех те хăйăн ĕçĕ тесе шутламасть.

Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана республикăра февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне çителĕксĕр пурнăçланă. Чăвашлесоохранин предприятийĕсем планă хатĕрлес енĕпе 72 процент, турттарас енĕпе 73 процент тултарнă пулсан, Чăваш АССР Наркомлесĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне хатĕрлес енĕпе 60,7 процент, турттарас енĕпе 53,1 процент кăна тултарнă.

Механизацилеменĕ çулсем патне йывăр турттарса тухмалли план пачах та çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать, çав плана февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе те 37 процент кăна тултарнă, хăшпĕр предприятисем вара унтан та сахалтарах пурнăçланă: Улатăр леспромхозĕ—11 процент, Вăрнар леспромхозĕ—13 процент, Хĕрлĕ Чутай мехлесопункчĕ—14,5 процент, Йĕпреç мехлесопункчĕ 15 процент кăна тултарнă. Çакна пула вутă турттаракан тракторсемпе автомобильсем час-часах ĕçсĕр тăраççĕ.

Çак ĕç çине хăшпĕр районсен руководителĕсем те тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Калинино районĕн механизацилеменĕ çулсем патне план тăрăх 10.000 кубометр вутă турттармалла, анчах вăл пĕр кубометр та турттарман; Хĕрлĕ Чутай районĕ 7.500 кубометр вырăнне 300 кубометр кăна турттарнă; Етĕрне районĕн 6.000 кубометр турттармалла пулсан, вăл 700 кубометр кăна турттарнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ансăр чугун çул вутă çук пирки нумай простой тăвать. Çакăн хыççăн Наркомлесăн механизацилеменĕ çулсем январь уйăхĕнчи плана 29,4 процент кăна тултарнинчен те тĕлĕнмелли çук.

Ку çитменлĕхсемпе килĕшме çук. Предприятисен руководителĕсем механизмсемпе туллин усă курма тивĕçлĕ. Районсен руководителĕсен çулсем патне вутă турттарса тухмалли плана фронтовой уйăхлăх вăхăтĕнче пĕр самахсăрах пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать.

Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх ирттерме йышăнса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана пур енĕпе те Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле, авиаци валли хыр хурăн хатĕрлемелли плана февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарас задача лартрĕç. Çак задачăна пурнăçа кĕртме вăрман хатĕрлекен предприятисемпе районсен çителĕклĕ майсем пур.

Фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăха ăнăçлăн ирттерес тесен, чи малтан, вăрманта ĕçлеме мобилизацилеменĕ çуран çынсене тата лавăçсене пурне те ĕçе кăларни кирлĕ. Вĕсем плана тултарма пултараймаççĕ пулсан, ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ татах уйăрса парас пулать. Ĕç вăйĕ улшăнса тăрассине пĕтерес шутпа, вăрманта ĕçлекенсем валли кирлĕ чухлĕ апат-çимĕç тата пылăх апачĕ турттарса памалла. Вăрманта ĕçлекенсен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатмалла. Вăрманти ĕçе организацилесе пыма, ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курмалла тума, лашасене лайăх пăхса усрас ĕçе йĕркелеме кашни колхозранах ответлă çынсем уйăрса ямалла. Вăрмана кайнă колхозниксем вĕсене хăйсене тата вĕсен колхозне панă заданине тултарниченех унта ĕçлемелле.

Вăрман хатĕрлес ĕçе районсен руководителĕсем хăйсем кулленех ертсе пымалла, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана тултарас тесе, пур мерăсене те йышăнмалла. Вăрман хатĕрлекен предприятисен руководителĕсен хăйсен ĕçне тĕпренех çĕнетмелле, инженерла-техникла работниксен тата мастерсен ответлăхне ӳстермелле.

Вăрманти ĕç иртен пуçласа кăçчен пулса пымалла, кашни рабочи тата кашни лавăç, кашни мастер участокĕ графика тултарса пымалли. Çапла пусан кăна эпир фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх задачине ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕпĕр.

1944—1945 çулхи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана 1945 çулхи февралĕн 5-мĕшĕ тĕлне мĕн чухлĕ тултарнине катартакан

СВОДКА

Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем	Плана тултарнă (процентпа)		Мĕнле вырăн ыйтăнать	
	Турттарас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе	Турттарас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе
Первомайски	106.3	92.3	1	4
Куславкка	105.8	100,1	2	3
Сентĕрвăрри	100.0	103.1	3	2
Комсомольски	92.5	57.8	4	20
Чурачăк	90.1	80.4	5	7
Çĕмĕрле	89.0	113.2	6	1
Вăрмар	79.8	49.6	7	26
Шăхасан	78.3	67.8	8	13
Чкаловски	75.6	70.0	9	11
Шупашкар	74.6	79.8	10	8
Канаш	73,7	68,5	11	12
Муркаш	72.9	65.5	12	16
Советски	71,8	64.5	13	17
Октябрьски	71,0	73.0	14	9
Хĕрлĕ Чутай	70.8	85,6	15	5
Йĕпреç	70,8	65.7	16	15
Ишлей	68.3	71,7	17	10
Калинино	66.2	85.6	18	6
Елчĕк	63.1	53,6	19	24
Вăрнар	58,9	61,1	20	18
Кувакино	58,7	67,2	21	14
Çĕрпӳ	57,9	57,7	22	21
Етĕрне	57,2	55,3	23	23
Элĕк	53,5	45,0	24	27
Сĕнтĕр	53,1	50,4	25	25
Тăвай	48,2	56,1	26	22
Красноармейски	46.8	58.9	27	19
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	111,2	102.6	1	1
Кире вăрман хуçалăхĕ	103.7	83,2	2	3
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ	90,1	80,4	3	4
Алтышево вăрманпромхозĕ	87.5	61,0	4	13
Кире вăрман пункчĕ	85,2	86,1	5	2
Канаш вăрманпромхозĕ	80.0	52.4	6	14
Вăрнар вăрман хуçалăхĕ	78.3	67,8	7	8
Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	72,5	65,0	8	10
Йĕпреç вăрманпромхозĕ	66,3	66,8	9	9
Хĕрлĕ Чутай вăрман пункчĕ	64,2	69,3	10	7
Вăрнар вăрманпромхозĕ	62,3	75,5	11	5
Йĕпреç участокĕ	61,9	71,7	12	6
Буинск вăрманпромхозĕ	61,0	64,3	13	11
Çĕмĕрле вăрман пункчĕ	60,6	61,1	14	12

Промкооперацине инвалидсен кооперацийĕн работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Февралĕн 5—6-мĕшĕсенче Шупашкарта промкооперацине инвалидсен кооперацин работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта ВКП(б) райком секретарĕсем, райсоветсемпе хула совечĕсен исполком председателĕсем те пулчĕç. Канашлу промкооперацине инвалидсен кооперацин 1944 çулхи ӳсĕсен итогĕсемпе 1945 çулхи задачăсем çинчен Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Терентьев юлташ тунă доклада итлесе сӳтсе-явăрĕ.

Промкооперацине инвалидсен кооперацийĕ иртнĕ çулта пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 81,3 процент тата куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 94,5 процент тултарнă. Республикăри 171 артельрен 143 артель плана тултарайман. Куллен кирлĕ хăшпĕр таварсене — ураша, суна, ут-тавраш, катка-пичке, сĕтел-пукан, супăнь, чашăк-тирĕк—сахал туса кăларнă. Шупашкартри «Кожупряжь» артель иртнĕ çулта пĕтĕмпе те 13 хăмăт, 19 ĕнерçĕк тата 72 йĕвен ĕç тунă. Хăшпĕр таварсен пахалăхĕ начар. Çавна пула вĕсем лавкасенче сутăнмасăр выртаççĕ.

Артельсенче ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, нумай артельсенче ĕç дисциплини сӳрĕк.

Промкооперацин артелĕсем лайăх ĕçлесси вĕсене районсоветсемпе хула совет исполкомĕсем вăхăтра тата кирлĕ пек пулăшса пынипе нумай килет. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Стахановец» тата «Сура» артельсем юхăнса саланса каяс патнех çитнĕ. Райсовет исполкомĕ çакна пĕлнĕ пулин те нимĕн те туман.

Терентьев юлташ промкооперацине инвалидсен кооперацин умĕнче 1945 çулта тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. 1945 çулта кооперацин промышленноçĕ 63790 пин тенкĕлĕх товар туса кăлармалла. Хăшпĕр таварсене—кирпĕч, тимĕр, тăмăртан тунă пек ăпаласем, ут-тавращĕсем, катка-пичкесем, сĕтел-пукансем—туса кăларасси, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 2 хут ӳсмелле. Хут тăвакан производство организацилемелле. Кăçал çĕнĕрен 5 промартель тата инвалидсен кооперацине 3 артель организацилемелле. Тăхăнмал. ли ăпаласем тата ĕç хатĕрĕсемпе кил тавращĕнчи ăпаласем юсамалли мастерскойсем 85 ӳсмалла.

Доклад тăрăх пренире 34 çын тухса калаçрĕ. Вĕсем промкооперацине инвалидсен кооперацин ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕплĕн тишкерчĕç, çитменлĕхсене пĕтерме сĕнӳсем пачĕç.

Канашлура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ М. Андреев тата ВКП(б) Обком секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместителĕ Репкин юлташсем пулчĕç.

Хĕрлĕ кĕтес уçрĕç

Канашри депора кăçал январь уйăхĕнче хĕрлĕ кĕтес уçрĕç. Унта халĕ кашни кунах кино кăтартаççĕ. Хĕрлĕ кĕтесе тĕрлĕ хаçат-журналсем килсе тăраççĕ. Хаçат-журналсем вулама сӳрекенсем йышĕ пысăк.

Хĕрлĕ кĕтесре рабочисен техникăпа политика пĕлĕвне ӳстерес шутпа семинарсем иртеççĕ.

Хĕрлĕ кĕтес валли шашка-шахматсем, сĕтел-пукансем кирлĕ чухлĕ тупса паманка, унта тата радио кĕртмелле.

В. А.

Вырăссен Православли Чиркĕвĕн Соборĕ çинчен

Январĕн 31-мĕшĕпе февралĕн 2-мĕшĕнче Мускавра, Епископсен Соборĕ 1944 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче йышăннă тăрăх, Мускавпа Пĕтĕм Руç Патриархне суйлама тата Вырăссен Православли Чиркĕвне тытса тăмалли Положение йышăнас шутпа Вырăссен Православли Чиркĕвĕн Соборĕ пулса иртнĕ. Собор ĕçне çаксем хутшăннă: Ленинградпа Новгород Митрополичĕ Алексий, Крутица Митрополичĕ Николай, Киевпа Галиции Митрополичĕ Иоанн, Сурçĕр Америкăпа Алеут Митрополичĕ Вениамин, 41 архиепископпа епископ тата приход духовенствипе мирăнсен 126 представителĕ пулнă.

Хисеплĕ хăнасем хушшинче Соборта çакăсем пулнă: Александрия Патриархĕ Ырă Христофор, Антиохипе Пĕтĕм Хĕвелтухăç Патриархĕ Ырă Александр III, Пĕтĕм Грузин Католикос-Патриархĕ Таса та Ырă Каллистрат, Константинополь-ри Вселенски Патриархăн представителĕ Фиартирс Митрополичĕ Германос, Иерусалим Патриархĕн представителĕ Севасти архиепископĕ Афиногор, Сербири Православли Чиркĕвĕн Синочĕн представителĕ Скопляна Митрополичĕ Иосиф, Румынири Православли Чиркĕвĕн представителĕ Аржеш Епископĕ Иосиф тата вĕсемпе пĕрле килнĕ митрополитсем, епископсем, протоиерейсем тата ытти çынсем те.

Собора уçнă чухне молебен тунă тата Собор председателĕ пулса ертсе пыракан Патриарх Вырăнне Упракан Ленинградпа Новгород Митрополичĕ Алексий сăмах калланă.

ССР Союзĕн Правительстви ячĕпе Собора ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Вырăссен Православли Чиркĕвĕн Совечĕн председателĕ Г. Г. Карпов саламланă.

Митрополит Николай сĕннипе Собор пĕр канашлă пулса, ССР Союзĕн Правительствине чĕнсе калакан çыру йышăннă.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Вырăссен Православли Чиркĕвĕ мĕнле ĕçлесе тăни çинчен Патриарх Вырăнне Упраса тăракан Алексий Митрополитăн докладне итленĕ. Собор Вырăссен Православлин Чиркĕвĕн тытăм йĕрки çинчен калакан Положение сӳтсе-явăнă, ăна пĕр канашлă пулса йышăннă. Кунсăр пуçне, Собор составĕ çинчен мандат комиссийĕ тунă доклада тата духовнăй шкулсем çинчен Православине Богослави институчĕн Ректорĕ Тихон Попов Протоиерей тунă доклада итленĕ.

Çакăн хыççăн Собор Мускавпа Пĕтĕм Руçри Патриарха суйлас ĕçе тытăннă.

Собор пĕр сасăпа Мускавпа Пĕтĕм Руç Патриархĕ пулса ĕçлеме Патриарх вырăнне Упраса тăракан Ленинградпа Новгород Митрополичĕ Алексие суйланă.

Собор Пĕтĕм тĕнчери христиансене тата Вырăссен Православли Чиркĕвне чĕнсе калакан çыру йышăннă.

Февралĕн 4-мĕшĕнче Патриархăн Кафедральнăй Богоявлени Соборĕнче чаплă литурги вăхăтĕнче Мускавпа Пĕтĕм Руçри çĕнĕрен суйланă Патриарха ĕçе пилленĕ. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицийлĕ армийĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен бронетанковăй часĕсем Моншау хулинчен 6 миля çурçĕр-хĕвелтухăçне. рехре Штраух хулине туртса илнĕ. Рурберг хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем Рур шывĕ çинчи Урфтальшпере пĕвинчен хăнтăртарахри вырăна пырса тухнă. Ытти чассем çав пĕве патне çитнĕ те ăна тытса илнĕ. Союзниксен Шлейденран (Германи) икĕ мильăра кĕрешекен пехоти 1.500 ярд хĕвелтухăçнелле куçнă.

Союзниксен çарĕсем Шлейденран 2.5 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехри Холенталь хулинче çапăçрĕç. Унтан кăнтăртарахра союзниксем Германири Брандшейд хулине тăшмантан тасатнă. Страсбург хулинчен çӳрĕртерехри тата Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехри районра лăпкă тăрать.

Кольмар секторĕнче, союзниксен часĕсем Руффах хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра пĕрлешнине пула, тăшман çарĕсене икĕ пая уйăрса янă.

Тури Вогезра союзниксем, вырăн унта çапăçма йывăр пулсан та, тăшманăн хупăрласа илнĕ часĕсене хĕссе пыраççĕ. Союзниксем Фехт шывĕн тури тăрăхĕнчи улăха ларакан Миттлах тата Мюльбах хулисене тăшмантан тасатнă тата çав шывăн анат тăрăхĕнчи Вальбах хулине тытса илнĕ. Унтан кăнтăртарахра Гебвейлер хулине тата унпа юнашар ларакан ытти хуласене те тăшмантан тасатнă.

Тăватă кун хушшинче, февралĕн 3-мĕшне çитиччен, союзниксен çарĕсем хĕвеланăçĕнче 6.912 нимĕçе тыткăна илнĕ. Çапăлăк начар тĕлне пирки авиаци вăйлах кĕрешнĕ. Çăмăл бомбардировщиксен соединенийĕ Берлина тапăннă.

Берлинри лару-тăру

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Афтонбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 4-мĕшĕнче кăçхине Берлина çапăлах пушарсем пулнă. Темиçе çĕр пин çын ялкăшса çунакан столицăран тухса тарать. Нумайĕшĕ хĕвеланăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле суранах каяççĕ. Беженецсем çав тери нумай пулнипе çулсем кăпланa-кăпланa лараççĕ. Ратуша, Тиргартен, Унтер Ден Линден, Александрплац районĕсем пит вăйлă çунаççĕ».

«Экспрессен» хаçатра тин çеç Берлинран таврăннă швед каласа кăтартнине пичетлесе кăларнă. «Берлинри пĕтĕм власть,—тенĕ вăл,—гестапона эсэсовецсен аллинче. Яланхи çарсен салтакĕсене Берлин хулинче курма сукпа пĕрех. Берлина çынсем калама çук хытă хăраса ӳкнĕ. Мĕн тумалли пĕлмеççем кăтартса парассине вĕсем ахалех кĕтеççĕ. Беженецсене тата çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă çынсене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен организацисенче нимĕнле йĕрке те çук».

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ПУÇЛАХĔСЕМ ХĂРАСА ӲКНИ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Германирен килекен хыпар сем калаçа тăрăх, Хĕрлĕ Çар вирлĕ наступлени туса пынине пула, гитлеровецсен Польшăри тата Германин хĕвелтухăç облаçĕсенчи пуçлăхĕсем хăраса ӳкнĕ. Гитлерла влаçсем, çав пуçлăхсене хăйсен выränĕсене пăрахса тарма чăрас тесе, çирĕп мерăсем йышăннă. Çапла, Гитлер агентстви—Германин информаци бюровĕ—пĕлтернĕ тăрăх, «хальхи йывăр вăхăтра хăраса ӳкнĕ намăссăр темиçе чиновника» Гиммлер çар судне панă. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Бидгощ (Бромберг) хулинче немĕç полицийĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ штандартенфюрера фон Залиша суд перçе вĕлермелле тунă. Залиша вара перçе пăрахнă. Кунсăр пуçне, Бидгощри округ управленийĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ Кюна, çав хулан бургомистрĕ пулнă Эрнста тата Гитлер партийĕн Бидгощри организацийĕн лидерĕ пулнă Рампфа вырăнтан та, чиновнăка та, штрафной батальона янă.

ПЕТР КОРОЛЬ СĔННЕ ИКЕ РЕГЕНТА ТИТО МАРШАЛ ЙЫШАНМАН

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет:

«Петр король Югославин регент совечĕ кĕртме (король çав совета вара хăйĕн влаçне памалла) виçĕ çынна сĕннĕ. Тито маршал çав çынсенчен иккĕшне йышăнман. Çавăн пирки Белградра çĕнĕ правительство тăвас ĕç тепĕр вăхăта юлать. Тито маршал хăй Симович генерална Шутей доктора мĕн пирки йышăнманнин çинчен ĕнер Шубашич премьер-министр урлă короле каласа панă. Петр король сĕннĕ кандидатурăсенчен Тито Маршал Душан Сернеца çеç йышăнать. Сернец вăл Словени губернаторĕ пулнă. Килĕшӳ тăрăх, вăл регентсен шутне кĕмелле пулнă. Çав килĕшӳ тăрăх, Белградра çĕнĕ правительство туса хумашкăн король правительстви Тито маршалăн Ирĕклĕх Комитечĕпе пĕрлешмелле пулнă. Шубашничпа Тито тунă килĕшӳре кăтартнă ытти икĕ кандидатурăпа Петр король килĕшмен. Çав кандидатурăсем çаксем: Александр Белич тата Антон Мажич доктор.

Титон Лондонри официальнăй представителĕ паян, регент совечĕ тăвас ыйтăва часах татса парăç, тесе шанса каланăччĕ. Анчах кайран çакă паллă пулса тăнă: король регент советне хăй сĕннĕ çынсенех кĕртесшĕн, вăл хăйĕн интересĕсене тĕкĕнместпĕр тесе сăмах парсан çеç пăртак чăкма килĕшет. Çакăн пирки Шубашич доктора правительстви çак ĕнерле Белградра тухса каяймасть ĕнтĕ.

Шубашич доктор иртнĕ ĕнерле король ирĕк памасăр Лондонран тухса каяс çукки çинчен каланă пулин те, вăл хăйĕн правительствине пĕрле, тен, Белграда пурпĕрех тухса кайĕ. Шубашничпа унăн правительстви Петр корольне килĕшиччен те Белграда тухса кайма тăтăр тăнă.

Греции лару-тăру

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци правительствипе ЭАМ представителĕсен канашлăвĕ февралĕн 3-мĕшĕнче уçăлнă. Канашлура чи малтан ют сĕршыв ĕçĕсен министрĕ Софианополюс сăмах тухса калланă. Вăл правительствăн программи çинчен каласа панă. Çав программăра çак пунктсем пур:

1) Халăх çарне çара илме тивĕçлĕ çулти çынсене илсе йĕркелемелле, çарти офицерсемпе унтер-офицерсене ятларах тунă техникăллă çар комиссийĕ сӳйласа илмелле, вăл комисси акăлчансен çар миссийĕпе пĕрле ĕçлемелле;

2) Хальхи полицине жандармерине, вĕсене çĕнĕрен организацилиннех çаплипех хăвармалла. Полици хушшинчен нимĕçсемпе пĕрле ĕçленĕ çынсене тасатса кăлармалла;

3) Нимĕçсемпе пĕрлешсе ĕçленĕ çынсене суд тумалли çинчен калакан закона пурнăçа кĕртмелле;

4) Общество шухăшĕсене ирĕклĕн палăртма чăрмантаракан правительство законĕсене пăрахăçа кăлармалла;

5) Çĕршывра лăпкăлăх пулса тăнă хыçăн çар положенине пĕтермелле, профсоюзсен сӳйлавĕсене ирĕклĕн пуса ирттерме май памалла;

6) Греци конституцине йышăнма ирĕклĕ плебисцит ирттермелле, учредительнăй пухăва сӳйлама ирĕк пулмалла. Греци правительстви çав сӳйлавсенче союзниксен сăнаса тăракан çыннисем пулинне ырлана пулĕччĕ;

7) Алла хĕçпăшал тытса правительствăна хирăç тăнăшăн çеç айăплă пулса тăракан ЭЛАС членĕсене суд тумалла мар. Уголовнăй кодекс тăрăх суда пама тивĕçлĕ е вăрçă вăрçмалли йĕркесене пăснă членĕсене кăна судпа айăпламалла.

Софианополюс çапла калаçă: правительство шучĕпе, сак программăна пурнăçа кĕртес тесен, икĕ условие йышăнмалла: пĕрремĕшĕнчен, ЭАМ аллинчи заложниксене халех ирĕке кăлармалла, вĕсенчен тăшманпа пĕрлешсе ĕçленĕшĕн айăплисене правительство власĕсен аллине памалли; иккĕмĕшĕнчен, яланхи çар шутне кĕмен çар часĕсене пуçне те çалатса ярса вĕсе хĕçпăшалĕсене государство аллине памалла.

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăскăнс конференцине пулнă ЭАМ делегачĕсем амнисти пирки правительство сĕннине йышăнни çинчен пĕлтернĕ. Делегатсем çапла каланă: правительство хăйĕн шухăшĕсене çине тăрсах хӳтĕлени каласусем татăлса каясси патне илсе пыма пултарассине шута илсе, çавăн пирки те çĕршыв «инкек умне пырса тухассине» шута илсе, делегатсем наказани парас ыйтăва «правительство делегацийĕ каласа панă принципсемпе татса парассине килĕшнĕ».

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци правительствипе каласа пынă ЭАМ делегацийĕн руководителĕ Сантос канашлура çапла каланă: ЭЛАС-а преступленисем тунăшăн айăплакан çынсем çакна манаççĕ: преступленисене вĕсене Греци ирĕке кăларичченех халăха Гитлер ячĕпе асаплантарса пурăннă çынсем тунă. Элеклени, арестлени тата хĕсĕрлени халăха тепĕр хут ирĕклĕхсем парассине хирĕç пыма пултараççĕ. Сантос малалла çапла каланă: заложниксем çинчен тăракан ытăва ЭЛАС вĕсене ирĕке кăларма приказ панипе татса панă. Çара хĕçпăшалĕсенпантарас ыйту çине кӳрсе, ЭАМ лидерĕ çапла каланă халăхăн çĕнĕ çарне, яланхи пекех, призыв тăрăх туса пымалла. Çара чухлĕ çын илмеллине правительство хăй тивĕçĕпе памалла, тенĕ.. Правительство «Зачинсемсĕр пуçне çарта нимĕнле «Элас.ăн лец та пулмалла мар», тенĕ. Вĕсене çара пасра тăракан офицерсене илмелле». Çĕнĕ çара илме тивĕçлĕ çултăпа пĕр-пĕр шутăтти çинсене илнĕ пирки, Государство çарта политикăллă ӳтра полицине жандармерине, хăш пуçлисене тата пуçлисене тăнă вăл администрацинчен тăнă çынсенчен тата дармерине тесенчен тасатмалла, тенĕ. Хăтра вĕсене фашистсенă тăрăх, плебисцита мĕн май Санто ăн хăвăртрах иртерм